28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
СЕНТЯБРЬ
19
ЮНКУН
182(6933) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

## Вăйлă садсем ĕрчетер!

1940—41 çулсенче Чăваш республики пуян та чаплă садсен республики пулнă. Кашни колхозăн тенĕ пекех хăйĕн пĕрлешӳллĕ сачĕ пулнă. Çавăн пекех колхозниксемпе рабочисем тата служащисем те хăйсен кил вырăнĕсенче çимĕç йывăççисем лартса ĕрчетнĕ. Чăваш республикинчи пасарсене чи лайăх сортлă улмасемпе грушăсем, чиепе слива çырлисем тата ытти çимĕçсем нумай тухатчĕç. 1940—41 çулсенчи шартлама сивĕ:ем республикăри садсене çав тери пысăк сиен кӳчĕç. Садсем пурте тенĕ пекех пĕтсе ларчĕç. Анчах садсемсĕр, çырласемпе панулмисĕр мĕнле пурнăç пулать-ха вăл? Чăваш çĕршывĕнче пирĕн асаттесем те, вĕсен аслашшĕсем те улмапа çырласăр нихăçан та пурăнман. Çав çимĕçсем пирĕн республикăра халĕ те тулăх пулма тивĕçлĕ. Çавна эпир тума пултаратпăр, тумалла та. Çавна тăвассишĕн колхозниксемпе колхозницăсен, рабочисемпе служащисен çине тăрса тăрăшмалла.

Садсем ĕрчетес ĕçе, ялхуçалăхĕнчи çак питех те паха ĕçе, парти организацийĕсен, вырăнти советсемпе çĕрĕç органĕсен большевикла ертсе пымалла. Садсене пурне те çĕнĕрен чĕртмелле, кашни колхозрах, предприятисемпе учреждениссен пахчисенче, колхозниксемпе рабочисен тата служащисен кил вырăнĕсенче садсем лартса ӳстермелле,—çакăн пек ĕнтĕ халăх хуçалăхĕн ниепле те кая хăварма çук паха задачи.

Чылай районсемпе колхозсенче, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, садсем чĕртес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Сăмахран, кăçалхи çуркунне республика çĕнĕ садсем лартмалли плана 126,8 процент тултарнă. Садсем ĕрчетес тĕлĕшпе иртнĕ çуркунне Ишлей районĕнче нумай ĕç тунă. Ку район садсем лартса ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн социализмла ăмăрту пуçарса ячĕ. Районри колхозсем çуркунне çимĕç йывăççисем лартмалли плана 133 процент, хăрнă садсене çĕнĕрен чĕртмелли плана 93 процент тултарнă. Çуркуннехи вăхăтра çимĕç йывăççисем лартас ĕçе Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсенчи ялхуçалăх артелĕсем те начар мар туса ирттерчĕç.

Анчах хăрнă садсене çĕнĕрен чĕртес тата юлашки çулсенче лартнă çамрăк садсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе Куславкка, Первомайски, Пăрачкав тата Çĕмĕрле районĕсенчи нумай колхозсем нимĕн те туман. Çав районсем çуркунне çимĕç йывăççисем лартмалли плана та тултарман. Кунтан та ытларах, асăннă районсенче чылай садсене выльăхсем кышласа пĕтернĕ. Парти райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсем садсем ĕрчетесси çине çавăнпа пăхмаççĕ, çав ĕçе хăйсем тума тивĕçлĕ мар, иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хураççĕ. Районсемпе колхозсен руководителĕсем садсем лартса ĕрчетес ĕçе хакламаннине пĕтермелле.

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă çĕнтерӳпе пĕтрĕ. Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Ялхуçалăхĕн мĕнпур отраçлĕсене, вăл шутра садсем лартса ĕрчетес ĕçе те, çĕнĕрен вăйлатса яма пысăк майсем пур. Садсем пирĕн колхозсене пысăк тухăç панипе асра тытмалла. Пирĕн республикăри государствăпа колхоз питомникĕсенче çак кĕркунне лартма хунав йывăççем çителĕклĕ таранах тупма пулать. Эпир 1945 çулхи çуркунне палăртса хунинчен нумай ытларах йывăç лартма пултаратпăр. Çавна шута илсе, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1945 çулта кĕркунне çĕнĕрен садсем лартмалли плана çирĕплетрĕ. Çав план тăрăх пирĕн 90 гектар чухлĕ улмуççисем, 78,5 гектар чухлĕ çырла-çимĕç йывăççисем лартмалла, 446 гектар çинчи хăрнă садсене çĕнĕрен чĕртмелле. Кунсăр пуçне, колхозниксемпе рабочисен тата служащисен кил вырăнĕсенче çимĕç йывăççисем 52.000 тĕп лартмалла.

Парти Обкомĕ панă заданисене шута илсе, ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен садсем лартса ĕрчетмелли плана колхозсемпе колхозниксем патне халех çитермелле. Çав задани пысăк мар, ăна кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртес пулать. Çавăн пекех шкулсем, ача çуртчĕсем, сывлăх учрежденийĕсем, МТС-сем, промышленность предприятийĕсен подсобнăй хуçалăхĕсем çумĕнчи пахчасенче садсем лартса ĕрчетмелли плана та пĕр пăркаланмасăрах пурнăçламалла.

Октябрĕн 1-мĕшĕччен республика Наркомземĕ çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен кустовой канашлăвĕсене ирттерет. Çав канашлусенче парти Обкомĕн бюровĕ кĕркунне çĕнĕрен садсем лартасси çинчен йышăннă решение сӳтсе-яваççĕ. Çавăн пек канашлусене колхозсемпе ял Совет председателĕсене те пухса ирттермелле, канашлусен ĕçне колхозсенчи пахчаçăсене хутшăнтармалла.

Çĕнĕ садсем лартмалли плана пĕр пăркаланмасăрах пурнăçлас шутпа, республикăра октябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче çирĕмкунлăх пулса иртет. Çав вăхăт хушшинче колхозсемпе совхозсенче, колхозниксемпе рабочисен тата служащисен кил вырăнĕсенче лартмалли плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртмелле. Çавăн пекех тата ватăлнă е хăрма пуçланă улмуççисемпе çимĕç йывăççисене сиплесе тиитерлемелле, сивĕ çиллсенчен сыхланмалли хӳтлĕхсем тумалла, пахча картисене тытмалла тата ытти ĕçсене те тимлĕн туса ирттермелле.

Иртнĕ çулсенчи опыт çакна кăтартса парать: ялсемпе хуласенче йывăççем лартса ĕрчетес ĕçре çĕрĕç органĕсене комсомолпа пионер организацийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. ВЛКСМ Обкомĕпе комсомол райкомĕсен тивĕçĕ — çитес çирĕмкунлăха мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене, пионерсемпе вĕренекенсене активлăн хутшăнтарасси пулса тăрать.

Чăваш республики пуян та чаплă садсен республики пулнă, вăл малашне те çавăн пекех пулмалла!

## РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

| Районсем | Тырă вырнă | Кĕлти хывнă | Авăн çапнă | Курăк вăрлăхĕ пухнă |
|---|---|---|---|---|
| Вăрнар | 100,0 | 66,4 | 48,2 | 11,1 |
| Советски | 100,0 | 56,8 | 40,8 | 27,8 |
| Красноармейски | 100,0 | 62,5 | 49,9 | 42,8 |
| Калинино | 99,4 | 63,5 | 43,3 | 24,5 |
| Елчĕк | 99,4 | 57,5 | 38,0 | 11,6 |
| Чурачăк | 99,1 | 64,1 | 44,1 | 25,3 |
| Етĕрне | 98,9 | 63,7 | 37,8 | 79,4 |
| Элĕк | 98,8 | 70,3 | 44,4 | 22,9 |
| Сĕнтĕр | 98,5 | 57,3 | 43,7 | 26,7 |
| Сĕнтĕрвăрри | 98,2 | 63,0 | 49,3 | 13,3 |
| Чкаловски | 98,1 | 59,4 | 44,1 | 17,6 |
| Çĕрпӳ | 98,1 | 56,5 | 45,4 | 74,1 |
| Октябрьски | 97,9 | 68,0 | 54,3 | 93,0 |
| Ишлей | 97,8 | 61,1 | 49,7 | 27,2 |
| Шупашкар | 97,2 | 66,4 | 60,8 | 60,7 |
| Вăрмар | 97,1 | 89,7 | 43,5 | 18,1 |
| Шăхасан | 97,0 | 65,4 | 49,1 | 30,5 |
| Первомайски | 96,5 | 61,0 | 47,0 | 6,8 |
| Тăвай | 96,1 | 51,7 | 45,5 | 29,8 |
| Муркаш | 95,8 | 52,0 | 45,1 | 7,3 |
| Куславкка | 95,5 | 58,7 | 49,1 | 46,5 |
| Хĕрлĕ Чутай | 95,5 | 55,2 | 40,2 | 33,9 |
| Пăрачкав | 94,8 | 56,7 | 39,8 | 17,0 |
| Шăмăршă | 89,8 | 76,4 | 57,4 | 66,3 |
| Йĕпреç | 89,3 | 61,1 | 51,4 | 6,5 |
| Комсомольски | 88,2 | 61,2 | 47,0 | 31,8 |
| Канаш | 87,4 | 60,4 | 51,0 | 8,6 |
| Çĕмĕрле | 86,6 | 58,9 | 39,6 | 9,0 |
| Улатăр | 85,0 | 70,3 | 49,5 | — |
| Кувакино | 73,5 | 63,2 | 46,6 | 18,9 |

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ТАТА КĔРХИ ТЫРĂ АКАС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

| Районсем | Кĕрхи çĕртме тунă | Кĕрхи тырă акнă |
|---|---|---|
| Çĕрпӳ | 24,1 | 103,3 |
| Сĕнтĕр | 22,2 | 102,2 |
| Шупашкар | 20,1 | 102,3 |
| Красноармейски | 18,8 | 101,8 |
| Елчĕк | 16,7 | 100,9 |
| Етĕрне | 15,1 | 102,7 |
| Октябрьски | 14,3 | 101,0 |
| Сĕнтĕрвăрри | 13,7 | 103,2 |
| Калинино | 13,1 | 101,0 |
| Чурачăк | 12,7 | 105,6 |
| Вăрнар | 12,7 | 100,7 |
| Ишлей | 12,2 | 101,2 |
| Шăхасан | 11,3 | 101,8 |
| Вăрмар | 9,6 | 101,1 |
| Чкаловски | 8,5 | 92,7 |
| Куславкка | 8,3 | 100,0 |
| Советски | 7,3 | 105,2 |
| Элĕк | 6,9 | 102,0 |
| Первомайски | 6,0 | 100,0 |
| Шăмăршă | 5,8 | 87,2 |
| Улатăр | 4,6 | 73,5 |
| Комсомольски | 4,4 | 95,8 |
| Йĕпреç | 4,1 | 100,0 |
| Муркаш | 4,0 | 102,1 |
| Тăвай | 3,4 | 97,2 |
| Канаш | 2,6 | 97,5 |
| Çĕмĕрле | 2,1 | 93,6 |
| Пăрачкав | 1,5 | 58,2 |
| Хĕрлĕ Чутай | 1,1 | 100,0 |
| Кувакино | 0,8 | 71,2 |

### Государствăна тырă парса татнă

КӲКЕÇ. (Телефонпа, хамăр корр.). Мерешпусĕнчи «Зерно» колхозра (председателĕ коммунист П. Скворцов юлташ) государствăна тырă леçме 8 лашаран ятарласа транспорт бригади организациленĕ. Бригадăна комсомолец А. Васильев ертсе пырать. Çак бригада çанталăк условийĕсене пăхса тăмасăрах, Заготзерно склачĕсене çĕрĕн-кунĕн тырă турттарать, государствăна тырă леçмелли плана вăл сентябрĕн 15-мĕшĕнче тултарчĕ.

Çавăн пекех государствăна тырă леçмелли плана Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Крахмал» колхозсем те тултарчĕç.

### Çулса пăрахнă тырă хиртех шăтса выртать

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпул вырса пухасси тата государствăна тырă парасси районра çаплипех чăтма çук начар пырать. «Герой» колхозăн вырмалли тырă 200 гектар шутланать. «Красный водник» тата «Коминтерн» колхозсем те тырпулсен 80 процентне кăна вырса пухнă. Çак колхозсен вырман тыррисем тăкăнаççĕ, анчах та тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Машинăсемпе усă курмаççĕ, колхозри пĕтĕм ĕç вăйне тырпул пухса кĕртес ĕçе мобилизацилемен.

Районра тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешмеççĕ. «Красный Октябрь» колхозра (председателĕ Никитин юлташ) 3 гектар çинчи тырра çулса пăрахнă та вăсĕ эрне хушши ĕнтĕ çыхмасăр выртараççĕ. Тырă пĕтĕмпех шăтса кайнă. «Трудовик» колхозра çапнă тырра 10 кун хушши итем çинче витмесĕр выртарнă. Çапла вара кунта та тырă пĕтĕмпех шăтса кайнă.

«Оборона» колхозра авăн çапма пĕр сăлтавсăрах чарăннă. Çавна пула 5 кун хушшинче государствăна пĕр килограмм тырă та паман.

С. ШАДИН.

### *Кĕрхи çĕртме тумалли графика тултарнă*

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсен график тăрăх сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурĕ 1800 гектар кĕрхи çĕртме сухаламалла пулсан, 1810 гектар сухаланă.

«Балтиец» колхоз çĕртме тумалли плана тултарнă. Янзакассипе Çĕньял ял Совечĕсенчи колхозсенче çĕртме тăвасси çителĕксĕр пырать. «Канаш», «Путь Ленина» колхозсем çĕртме тума та тытăнман.

### *Государствăна çĕрулми параççĕ*

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Тарапай ял Советĕнчи «Совет» колхозăн (председателĕ Н. Мокеев юлташ) государствăна обязательство тăрăх 102 центнер çĕрулми памалла, паянхи куна вăл 114 центнер панă. Колхоз членĕсемшĕн пурĕ 25 центнер вырăнне 40 центнер панă. Халĕ çĕрулми коопераци урлă сутаççĕ.

Колхоз государствăна купăста тата ытти пахчаçимĕçсем те парса татнă.

И. ИЛЮШКИН.

### Председатель васкаман çĕрте

МУРКАШ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 77 колхозран 32 колхоз кăна тĕштырăсене вырса пĕтернĕ. «Броневик», «Герой», «Путь Ленина», «Искра», «Совет», «Çĕнĕ хунав», Буденный, Энгельс, Маленков, Свердлов ячĕсемпе тăракан колхозсем тĕштырăсене вырса пĕтерсе 70—80 процентне капана хывнă тата 60 процентне çапнă. Анчах та, пĕтĕм районĕпе илсен, тырпул пухса кĕртесси начар пырать-ха. Районĕпе тата 1000 гектар тĕштырă вырса пухмалла. Панкли, Йӳçкасси, Оçкасси, Шурча ял Совечĕсенчи колхозсем уйрăмах юлса пыраççĕ. «Самолет» колхоз пысăках мар, анчах кунта вырман тырă тата 50 гектар ытла шутланать. Колхоз председателĕ Петров юлташ тырра хăвăртрах вырса пĕтерессишĕн тăрăшмасть. Кунта 2 жнейка пур, вĕсемпе усă курмаççĕ, кĕреплеллĕ çавасемпе çулмаççĕ. Колхозра ĕç дисциплини çук. Кашни кун ĕçе 90 çын вырăнне пурĕ те 40—45 çын кăна тухать. ВКП(б) райкомĕн тата райисполкомăн уполномоченнăйĕ пулса кунта çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Романов юлташ ĕçлет. Вăл çак колхозра тата ял Советĕнчи ытти колхозсенче ĕçе организацилес вырăнне, вăхăта ытларах хăй килĕнче ирттерет. Çак колхоз государствăна тырă парас ĕçре те юлса пырать. Паянхи куна вăл 410 центнер вырăнне пурĕ те 213 центнер кăна панă.

Ф. ИВАНОВ.

### Пĕрисем ĕçре, теприсем пасарта

КУСЛАВККА, «Динамо» колхоз тырă вырса пĕтернĕ. Çак колхозри Екатерина Сорокина колхозница тырă вырнă çĕрте кулленхи нормăна 200—220 процент тултарса ĕçленĕ. Вăл кăçал пĕтĕмпе 330 ĕçкунĕ тунă. Колхозра транспорт бригади лайăх ĕçлет. Бригадăри комсомолецсем вăкăрсемпе кăна 276 центнер тырă леçнĕ. Партин 16 съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра та комсомолецсем вăкăрсемпе тырă турттараççĕ. Вĕсем пурĕ 650 центнер тырă леçнĕ.

Çĕнĕ Тĕрлемесри «Восток» колхозра (председателĕ Лаврентьев юлташ) ĕçлеме пултаракансем 377 çын шутланаççĕ, вĕсенчен 100 çынна яхăн кăна ĕçе тухаççĕ, ытти 277 çын вăрманта майăр татаççĕ е пасарсенче çӳреççĕ. Н.Николаева, А. Орхимова, П. Светлова, Н. Егорова колхозницăсем тырă вырма тухнăранпа пĕр ĕçкунĕ те туман.

Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăх иртсе кайрĕ, анчах та колхоз председателĕ Лаврентьев ун çинчен колхозниксене ăнлантара паман, вĕсене вунăкунлăх задачисене пурнăçлама мобилизацилемен.

М. ОГОРОДНИКОВ.

## Çĕршыв валли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парар, выльăхсене хĕл каçарма кăтартуллăн хатĕрленсе çитер!

**Кострома облаçĕнчи, Кострома районĕнчи „XII-ый Октябрь“ ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене**

### ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Генилллĕ çулпуç тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, совет халăхĕ хамăрăн юратнă çĕршывăн чыслăхĕпе преклĕхне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ. Агрессиллĕ икĕ чи хăрушă государствăна—Германипе Японие —çапса аркатнă. Хĕрлĕ Çар, пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле, чаплă çĕнтерӳ турĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă колхоз стройĕн никам аркатайми вăйне кăтартса пачĕ. Пирĕн «XII-ый Октябрь» ялхуçалăх артелĕ, Совет çĕршывĕнчи ытти нумай пин колхозсем пекех, государствăна ашкакай, сĕт-çу тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Пĕр 1944 çулта кăна эпир государствăна 95 центнер какай, 86.200 литр сĕт патăмăр. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, пирĕн колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса, çирĕплетсе пычĕ.

Вăрçăччен пирĕн 230 пуç ĕне-выльăх пулнă, халĕ 296 пуç пур. Кунсăр пуçне, вăрçă çулĕсенче эпир хамăр фермăра çĕнĕ, Кострома ăратиллĕ 260 ĕне çитĕнтерсе ытти колхозсене сутрăмăр. Фермăри кашни ĕне пуçне вăтамран çултаlăкне 3.602-шер литр сĕт суса илетпĕр. Сурăхсен йышĕ вăрçă вăхăтĕнче тăватă хут, сыснасен йышĕ икĕ хут ӳсрĕ. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне пирĕн артель çулран çул ытлашшипех тултарса пырать.

Фермăсенчи выльăхсен йышĕпе тухăçлăхне эпир фермăсенчи ĕçе лайăх йĕркеленине пула, пирĕн животноводсен опытлă кадрĕсем пуррине пула ӳстерме пултартăмăр. Ферма работникĕсем пирĕн 8—10-шар çул е ытларах та ĕçлеççĕ. Эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чи лайăх ĕçлекен çынсен, пирĕн таварлă сĕт-çу заведующийĕн Прасковья Андреевна Малининăн, ĕне сăвакансен—Мария Васильевна Корневăн, Аполлинария Ивановна Савинăн, Евдокия Андреевна Курдюковăн, пăрусене пăхакан Анастасия Кузьминична Бараковăн, Мария Александровна Швылева конюхăн ячĕсемпе мухтанма пултаратпăр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре выльăх апачĕ тĕп вырăн йышăнса тăнине пĕлсе, эпир выльăхсем валли лайăх утăпа силос çителĕклĕ таран хатĕрлесе хуратпăр. Пирĕн фермăра ĕçлекенсем ферма çумĕнчи 4.25 гектар çĕре хăйсен вăйĕпе акса ĕçлерĕç. Эпир выльăхсене талăкĕ-талăкĕпех кĕтӳре сӳрететпĕр, кĕтӳ кĕтмелли ана-çарансемпе тĕрĕс усă куратпăр, кунсăр пуçне, выльăхсене çимĕç курăк çулса çитеретпĕр.

Халĕ колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем умĕнче ответлă задача—çĕршыври халăхпа Хĕрлĕ Çара—выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, промышленноça—чĕртавар мĕнле те пулин ытларах туса парас задача тăрать.

Хаклă юлташсем! Эпир Сире колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырассишĕн, выльăхсене хĕл каçарма кăтартуллă хатĕрленсе çитессишĕн тата вĕсене лайăх хĕл каçарассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнетпĕр.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир хамăр çак ĕçсене тума сăмах паратпăр:

1. 1945 çулта колхозăн лашасен, ĕне-выльăхсен, сурăхсемпе сыснасен йышне ӳстерес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултармалла.

2. Ама выльăхсене хĕсĕр хăвармалла мар, кашни кĕсререн—пĕрер тиха, кашни ĕнепе тына пăруран — пĕрер пăру, кашни сурăхран—путек илмелле, кашни сысна аминчен çулталăкне 12 сысна çури илсе пăхса çитĕнтермелле.

3. Выльăхсене пăхассине, апатлантарассине тĕрĕс йĕркелемелле, çапла вара выльăхсен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх фермисем тавар парассине малалла ӳстермелле. 1945 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.600 литртан кая мар сĕт суса илмелле. Государствăна пама 30 сысна самăртмалла, кашни сысни вăтамран 100 килограмм туртакан пулмалла.

4. Государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана срокчен тултармалла, кунсăр пуçне, государствăна 50 центнер какай тата 25.000 литр сĕт сутмалла.

5. Выльăхсем валли шултăра тата сĕтеклĕ апат хатĕрлемелли государство планне тултармалла. Ферма çумĕнчи участокран çимĕçсене вăхăтра пухса илмелле, кашни гектартан 270 центнертан кая мар тымар-çимĕç пухса илмелле. Кашни ĕне-выльăх валли 7-шер тонна сĕтеклĕ апат—силоспа тымар-çимĕç хатĕрлесе хумалла.

6. Выльăхсене хĕлле хупса усрамалли çуртсене октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса ăшăтмалла. Выльăх картишĕнче 100 пуç выльăх валли автопоилкăсем лартмалла.

7. Отечественнăй вăрçăра вилнĕ воинсен çемьисене, вăрçă инвалидĕсене, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çартан таврăннă çынсен çемьисене выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшмалла.

Юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем!

Социализмлă ăмăртăва хутшăнăр! Çĕршыв валли аш-какайпа сĕт-çу, çăм, тирсăран чĕртаварĕ тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парар!

Сывă пултăр паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ—çĕнтерӳçĕ-халăх!

Сывă пултăр пире çĕнтерӳсем туma организацилесе, хавхалантарса пыракан Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуç, колхоз хресченĕсен тусĕ, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Пĕрлешӳллĕ пуху хушнипе чĕнсе каланине çаксем алă пуснă:

Колхоз председателĕ **Д. Я. Шумилов.**

Колхозри парторганизаци секретарĕ **М. В. Аверина.**

Таварлă сĕт-çу фермин заведующийĕ **П. А. Малинина.**

Комсомол организацийĕн секретарĕ **М. П. Хомякова.**

Полевод **С. И. Шишина.**

Завхоз **А. А. Захарова.**

Бригадирсем: **М. А. Шишина, Н. И. Калинин, Т. И. Прохорова, А. И. Калинина, Ф. А. Курдюкова, А. А. Шабров, Е. В. Баракова.**

Таварлă сысна фермин заведующийĕ **М. Д. Швылева.**

Ене сăвакансем: **М. Е. Корнева, А. И. Савина, Е. В. Кузнецова, М. В. Егорова, А. И. Кузнецова, Н. И. Гавричева, З. И. Шапошникова, С. А. Полякова, З. Н. Аверина, М. В. Харитонова, Е. А. Курдюкова, Ю. И. Шишкова.**

Пăру пăхакансем: **Г. А. Савина, А. А. Протасова, А. К. Баракова, А. В. Гурьянова, В. Н. Малинина.**

Звеньевойсем: **Л. Н. Губанкова, Е. Гулюгина, Н. И. Климанова, Л. И. Швылева, М. И. Коптева, А. И. Шишина, З. И. Гаврилова, М. В. Феоктистова, Е. П. Бурзина.**

Кладовщиксем: **И. П. Шишин, М. А. Малинина.**

Конюхсем: **Ю. Г. Сараев, М. А. Швылева;** кĕтӳçĕ **О. В. Ворошилова;** сысна пăхакан **К. А. Пономарева;** сторож **М. П. Швылев.**

## Кутузов выставки Мускавра

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Мускавра документсен пысăк выставки уçăлнă. Ку выставкăна Тĕп Архив управленийĕ М. И. Кутузов фельдмаршал çурални 200 çул тултарнине хисеплесе уçнă.

Илемлетнĕ 12 стэнд çинче Кутузовăн пурнăçĕпе тата ĕçĕпе çыхăнса тăракан документсене, картăсене, схемăсене тата питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекесене вырнаçтарса тухнă.

1793—1794 çулсенче Кутузов посол пулса Константинополе кайнине тĕплĕн кăтартса панă. Уйрăм стэндсем çинче Кутузов дипломатире мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине, 1805—1806 çулсенче Наполеона хирĕç пулнă вăрçăра тата 1806—1812 çулсенче Турцие хирĕç пулнă вăрçăра Кутузовпа вырăссен ытти полководецĕсем мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕплĕн кăтартса панă.

Кутузов тата унпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем 1812 çулхи Отечественнăй вăрçа хутшăнни çинчен калакан документсене 4 стэнд çине вырнаçтарса тухнă. Европăна ирĕке кăларас ĕçре Россия, уйрăмăн илсен Кутузов мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен лайăх документсем пухнă. Вăрçă операцийĕсем çинчен калакан схемăсем тата вĕсене ăнлантарса панисем Кутузов çинчен—вырăссен çар искусствине тăваканĕ, Суворовăн талантлă вĕренекенĕ çинчен, хăйĕн учителĕн вĕрентĕвне çĕнĕлле аталантарнăскер çинчен тĕплĕн кăтартса параççĕ. Выставкăн юлашки стэндĕнче совет халăхĕ вырăссен аслă полководецне мĕнле хисепленине кăтартса панă. Пысăклатса ӳкернĕ Кутузов орденĕ тавра Хĕрлĕ Çар полководецĕсен сăнĕсене, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Кутузов орденне илме тивĕçлĕ пулнă çынсен сăнĕсене вырнаçтарса тухнă.

Çак выставкăна тăратнă ытти материалсем хушшинче М. И. Кутузовăн ашшĕ çинчен калакан документсене курakансем тимлĕн пăхаççĕ. М. И. Кутузовăн ашшĕ Российăра çарпа инженери шкулне чи малтан пĕтернĕ çынсенчен пĕри пулнă. М. И. Кутузов вĕреннĕ пособисем, XVIII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи пайĕнче вăрçă çинчен кăларнă вырăс тата ют çĕршыв литератури, «Очаков çывăхĕнчи çапăçун» планĕ, Кутузова посол туса Константинополе янă грамота, Рошук крепоçне илмелли план, 1811 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Кутузов хăй туса алă пуснăскер, 1812 çулта Кутузова вырăс çарĕн главнокомандующийĕ туни çинчен калакан документсем, ун патне Наполеон, 1-мĕш Александр янă çырусем, унăн приказĕсемпе рапорчĕсем выставкăра уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Выставкăра ытти документсем хушшинче Бородино уйĕнче пулса иртнĕ историллĕ çапăçу çинчен калакан материалсем, 1812 çулхи событисене асăилтерекен мемуарсем, листовкăсем, гравюрăсем нумай.

Вырăс çарĕ Парижа пырса кĕнĕ кун 1-мĕш Александр Кутузов патне янă çырăва, Матвей Казаков архитектор Парижра вырăс мухтавĕ çинчен калакан памятнике лартма сĕннĕ проекта куракансем тимлĕн пăхаççĕ.

Кутузова хисеплесе уçнă выставка вырăссен аслă полководецĕн сăнарне уçăмлăн асаилтерет.

* * *

М. И. Кутузов çурални 200 çул тултарнине хисеплесе Тĕп Архив управленийĕ ĕнер ăслăлăх совечĕн ларăвне туса ирттерчĕ. Унта столицăри ăслăлăх общественноçĕн представителĕсем, Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе генералĕсем нумай пулнă.

М. И. Кутузовпа унăн ĕçĕсем çинчен В. М. Четков генерал-лейтенантпа Н. М. Коробков профессор докладсем туса панă. (ТАСС).

### ТУРКМЕНИСТАНРА ПĔРРЕМĔШ ТЕПЛОЭЛЕКТРОЦЕНТРАЛЕ ТУСА ПĔТЕРНĔ

Красноводск хулипче Туркмен ССР-ĕнчи пĕрремĕш теплоэлектроцентрале туса пĕтерне. Теплоэлектроцентралĕн агрегачĕсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсем промышленность валли энерги парса тăма тытăннă. (ТАСС).

## *СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин Генералиссимуса*

Румынине таврăннă хыççăн правительство делегацийĕн членĕсем чи малтан Сирĕн превосходительство çинчен шухăшлаççĕ, эпир Мускавра пурăннă чухне пире çав тери лайăх йышăннăшăн тата Совет правительстви Румыни халăхне кăмăлласа уншăн ялан тăрăшнăшăн Сире тав тăватпăр. Совет Союзĕн правительствин членĕсем, Румыни правительствин членĕсемпе çав тери лайăх килĕштерсе вăйлăн ĕçлесе, Румынине юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе йывăр задачăсене татса пама май тупрĕç, çав кунсене эпир нихăçан та манас çук. Çав кунсенче эпир çав тери усăллă ĕçлени хамăр çĕршыва йĕркене кĕртме тата Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи туслăха çирĕплетме питĕ вăйлă пулăшĕç.

Румыни министрĕсен совечĕн председателĕ Петре Гроза.

### ЛЕНИН МАВЗОЛЕЙНЕ УÇНИ

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче, тăватă çул хушши хупă тăнă хыççăн, Ленин мавзолейне çĕнĕрен уçнă.

Кăнтăрла Хĕрлĕ площадьре Мускав халăхĕ темиçе пин çын пухăннă. Кунта Хĕрлĕ Çар çыннисем, рабочисем, инженерсем, служащисем пулнă. Ача амăшĕсем ачисене илсе пынă. Шăппăн, ним шарламасăр иртнĕ çынсем Владимир Ильич выртакан саркофаг çумĕпе.

Малтанхи кун мавзолее 10 пин çын ытла кĕрсе курнă. (ТАСС).

# Колхозсене ертсе пырас ĕçри хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен

Республикăри нумай колхозсем çулран çулах ăнăçлăн аталанса пыраççĕ тата яланах вайлă тырпул туса илеççĕ. Çав вăхăтрах çулсерен юлса пыракан тата хăйсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртсе пырайман колхозсем те пур. Çав колхозсенче вĕсене каялла туртакан темĕнле хăйне уйрăм сăлтавсем пур тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ.

Çапах та, мĕншĕн-ха вĕсем юлса пыраççĕ, вĕсем начар ĕçленин чăн-чăн сăлтавĕ мĕнре-ха?

Колхозсемпе районсен руководителĕсем хăйсем юлса пынине час-часах тĕрлĕ объективлă сăлтавсемпе е вĕсем ертсе пыракан колхозсемпе районсен уйрăмлăхĕсемпе ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Час-часах вĕсем: «çанталăк начар», «çĕр начар», тесе ÿпкелешеççĕ е урăхла «айăпсăр» сăлтавсем шырама пăхаççĕ.

Юлса пынине çакăн пек ăнлантарса пани витĕмлĕ марри курăнсах тăрать. Вăрнар районĕ ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те ăнăçлăн туса пырать тата кашни çулах вайлă тырпул туса илет пулсан, унпа юнашар Йĕпреç районĕ вара чăтма çук юлса пырать тата тырпул пухса кĕрес ĕççене çав терп начар туса пырать пулсан, çакна вара темĕнле объективлă сăлтавсемпе е районсен уйрăмлăхĕпе ăнлантарса пани кулăшла пулнă пулĕччĕ. Çавăн пекех Первомайски районри пĕр ялта вырнаçнă «Искра» колхозпа «Красный луч» колхоз хушшинче уйрăмлăхсем шырани те айванла пулнă пулĕччĕ, апла пулин те вĕсенчен пĕрремĕш колхозĕ районра малта пыракансенчен пĕри пулса тăрать, иккĕмĕшĕ вара питех те юлса пырать.

Анчах хăшпĕр руководительсем хăйсем юлса пынине ĕçлекенсем çитменнипе тата лашасем çитменнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. «Çынсем çук, лашасем çитмеççĕ»,—теççĕ вĕсем. Анчах та хăш колхоз халĕ: «манăн çынсем те, лашасем те ытлашшипех», тесе мухтанма пултарĕ-ха? Пуриншĕн те паллă, пур колхозсенчен те çынсем фронта кайрĕç, пур колхозсенчен те чылай лашасене Хĕрлĕ Çар валли мобилизацилесе илсе кайнă. Çапла ĕнтĕ, ĕç кунта пĕрисен çынсемпе лашасем ытлашшипех пулнинче, теприсен сахал пулнинче мар. Кунта ĕçе пĕлсе организацилени тĕп вырăн йышăнса тăрать. Колхоз председателĕ хăйĕн çыннисене тĕрĕс вырнаçтарса тăратма, хăйĕн аллинчи майсемпе тухăçлăн усă курма пултарчĕ пулсан — ĕç ăнăçлăн малалла кайрĕ, вăл çавăн пек тума пултараймарĕ пулсан—ĕç чарăнса ларчĕ. Çапла вара, колхоз председателĕн йывăрлăхсемпе витĕнсе лармалла мар, хăйсем юлса пынине тивĕççĕр сăлтавсемпе ăнлантарса памалла мар, çав йывăрлăхсемпе сăлтавсене çĕнтермелле, колхоз производствине пултарулăн йĕркелесе ямалла.

Колхоз председателĕ пĕрлешÿллĕ хуçалăхра ĕçе татса паракан çын пулса тăрать. Пĕрлешÿллĕ ĕç ăнăçлă е ăнăççăр пулассипе колхоз председателĕ организацилеме пултарнинчен килет; колхоз организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклеcнесси те, колхозниксем лайăх пурнăçпа пурăнасси те унтан килет. Вăл шултăра хуçалăхшăн ответ тытать, ялхуçалăх артельне пĕрлешнĕ çĕршер çын кунçулĕшĕн ответ тытать. Çакă вара, хăй майĕпе, колхоз председательне пуçарулла организатор, перекетлĕ хуçа, хăюллă администратор, пултарулла агитатор пулма хушать.

Йĕпреç тата Первомайски районсем юлса пыни вĕсен çавăн пек председательсем сахаллинчен килет те ĕнтĕ. Çав районсенчи колхозсен руководителĕсем нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: канцелярине вăхăтра пымалла та кирлĕ кăтартусем памалла—вара ĕç пулса та тăрать, теççĕ. Çапла тунипех ĕç тухмасан вара, тĕрлĕ сăлтавсем шырама тытăнаççĕ. Йĕпреç районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Никитин юлташ колхоз тырпул пухса кĕртес ĕçре юлса пынине çынсем çитменнипе ăнлантарса парать. Çав вăхăтрах кашни кун ĕçе миçе колхозник тухнипе миçе колхозник тухманнине, вĕсем нормăна мĕнле тултарнине, мĕнле ĕçре çын çитменнине тата мĕнле ĕçре çын ытлашшине тĕплĕн пĕлмест. Колхозра тырă вырас ĕç юлса пырать, çав вăхăтрах жнейкăпа усă курмаççĕ, кĕрепленлĕ çавасемпе ĕçлемеççĕ, уйрăм сдельщинăна ĕçе кĕртсе пымаççĕ. Лашасем сахал теççĕ, апла пулин те ĕнесемпе усă курмаççĕ, харпăрхăй ĕнипе ĕçлени колхозниксене мĕнле усă пани çинчен ăнлантарса памаççĕ. Тырпул вырса пухас хĕрÿллĕ вăхăтра кунта артель правленипе ревизи туна тытăннă, колхозри ĕçе оперативлăн ертсе пырас вырăнне, колхоз руководителĕсем пĕрпĕринпе харкашса ларма, пĕр-пĕрин çинчен элек сарма тытăннă. Никитин юлташ çынсем тата лашасем çитмеççĕ тесе каласси çакăн хыççăн мĕне тăрать-ха ĕнтĕ? «Герой» тата «Красный водник» колхозсен председателĕсем те çавăн пек калаçаççĕ. Анчах вĕсен те 300 колхозникрен хирте 150—200 çын кăна ĕçлет пулсан, çав калаçу мĕне кирлĕ-ха?

Лайăх ĕçлекен, малта пыракан колхозра, кашни çулах ĕç кунĕ пуçне темиçе килограмм тырă тата пахчаçимĕçсем валеççе паракан колхозра председательпе бригадирсем нихăçан та колхозниксем ĕçе тухмаççĕ тесе ÿпкелешмеççĕ. Пачах урăхла, ун пек колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем председательпе бригадирсенчен ĕç ыйтаççĕ, мĕншĕн те пулин айăпласа председатель вĕсене ĕç памасан вара, вĕсем районри организацисене кайса жалоба параççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра бригадăсем хушшинче «кĕвĕçÿллĕ» ăмăрту пырать—вĕсем пĕри тепринчен иртерех ĕçе тухма тăрăшаççĕ. Çапла ĕнтĕ, колхоз председателĕпе бригадирсен тĕп задачи—вайлă тырпулшăн кĕрешесси, ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те чи лайăх сроксенче тата пахалăхлăн туса ирттересси, çак майпа вара государствăна памалăх та, колхоза кирлĕ фондсене хывмалăх та, ĕçкунĕ тăрăх çителĕклĕ валеççе памалăх та тырпул туса илесси пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ Шупашкар районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. М. Матвеев юлташ, ватă колхозниксемпе колхозницăсем хирĕç тăнă пулин те, çумкуракĕ пусса илнĕ хиртех тепĕр хут сухаламасăр ыраш актарса, тĕрĕс мар тунă, мĕншĕн тесен вăл килес çул питĕ начар тырпул илме пултарать.

Кунсăр пуçне, кунта çакăн çинчен те асăрхаттарас пулать. Паллă ĕнтĕ, Йĕпреç, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсенче ĕçкунĕ тăрăх темиçе çул хушши вĕçренех тырă валеççе паман колхозсем те сахал мар. Колхоз председателĕсем çакна, ялан тенĕ пекех, тырă начар пулнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Çакăнпа килĕшме пулать-и-ха? Çук, мĕншĕн тесен колхозникĕн ĕçкунĕ пачах та тÿленмесĕр юлнă тĕслĕхсем пулмаççĕ, кирек хăш колхозра та колхозника мĕн чухлĕ те пулин тÿлеççĕ. Апла пулсан, тĕп сăлтавĕ кунта акă мĕнре: колхоз председателĕсем ĕçкунĕ хаклăрах пултăр тесе тăрăшмаççĕ, унăн хакне йÿнетсе яраççĕ, çавна пула вара колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ чакса пырать. Колхоз руководителĕсем тырпула перекетлеме тăрăшмаççĕ: тырă вырнă чухнехи тăккаланчăксене вĕсем асăрхамаççĕ, пур хуçалăх нушисем валли те тырпул расходлаççĕ, авансра тырă панă чухне пурне те пĕрпек параççĕ, кам мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине шута илмеççĕ. Çавна пула, вăл колхозсенче чи сахал ĕçленĕ колхозникĕн ĕçкунĕ чи нумай ĕçленĕ колхозникĕн ĕçкунĕнчен хаклăраха ларать.

Тырра аванс шучĕпе ĕçкунĕсем тăрăх кăна памалла. Çакăн пек тусан кăна аванс колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшать. Нуша килнине кура, çын шучĕ тăрăх е колхоз руководителĕсем çырса панă хут тăрăх аванс пани колхоз ĕçĕнчен пăрăнса çÿрекен кахалсемшĕн кăна усăллă.

Аванс панă чухне ĕçкунĕсене шута илмен, ĕçкунĕ хаклăрах пултăр тесе тăрăшман, колхозниксен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшман, вĕсене колхозра вăя шеллемесĕр ĕçлеме мобилизацилеме пултарайман руководитель—начар руководитель.

Чăн-чăн руководитель пулас тата колхозниксене артельте паттăррăн ĕçлеме большевикла мобилизацилес тесен, колхоз председателĕн колхозниксене ăнлантарса, ĕнентерсе пама пĕлес пулать, хăй тавра колхоз активне пĕтĕçтерме тата артель ĕçĕпе тачă çыхăнса тăракан массăллă ĕçе вайлатса пыма пĕлес пулать. Анчах Йĕпреç тата Первомайски районсенчи колхоз председателĕсем нумайĕшĕ ăнлантарса, ĕнентерсе пама юратмаççĕ, колхозра агитаци ĕçне туса пыма юратмаççĕ, ятласа, кăшкăрса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем приказсем, тĕрлĕ распоряженисем кăлараççĕ; колхоз вăл—государство предприятийĕ мар, ирĕклĕ организаци пулса тăнине, кунта председателе артель членĕсен пухăвĕ суйланине тата вăл, пуринчен малтан, ăнлантарса тата ĕнентерсе ĕçлеме тивĕçлине ăнланмаççĕ. Мĕнле ăнлантарса пани, мĕнле агитацилле ĕç пулма пултартăр-ха, сăмахран, Первомайски районри «11 лет Чувашии» колхозра, унта правлени пĕр хаçат та, районри хаçата та пулин çырăнса илмест пулсан? Колхоз председателĕн кама ăнлантарса памаллине, ÿкĕтлемеллипе тата кама ятламаллине, штрафламаллине пĕлес пулать. Анчах Йĕпреç районĕнчи Андрюшевăри колхоз правленийĕ пĕр ларурах 22 колхозника, вĕсенчен пĕрне пĕр тăруках 76 ĕçкунĕ чухлĕ штрафланă пулсан, çакна вара нимпе те тĕрĕс тесе йышăнма çук. Çитменнине тата çак ларура парти райкомĕн пропаганда отделĕн заведующийĕ Оптиков юлташ та пулнă, анчах вăл çав йăнăша тÿрлетмен.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх, штраф колхозниксене воспитани памалли, кайра пыракансене малтисемпе танлаштармалли май пулса тăрать. Çак майпа пĕлсе усă курмалла, унсăрăн ĕçре сиен кăна пулма пултарать. Правленин задачи—колхозниксене ытларах штрафлас тесе тăрăшасси мар, пĕр-ик çынна штрафласа ыттисемшĕн çирĕп урок тăвасси пулмалла.

Колхозсене ертсе пырас ĕçри çак мĕнпур çитменлĕхсем колхоз председателĕсем ялхуçалăх артелĕн уставĕ хушнисене пĕлменнинчен е Устав хушнисене пăхăнса пыманнинчен килеççĕ. Анчах вĕсене районри руководительсем те çав çитменлĕхсене кăтартса памаççĕ, колхоз председателĕсен кашнин хăйне уйрăм çитменлĕхĕсене асăрхамаççĕ, вĕсене конкретлăн мар, пĕтĕмĕшпе илсе ертсе пыраççĕ. Ĕненмелле пултăр тесе, пĕр пример илсе кăтартатпăр.

Первомайски районри Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ—юлса пыракансенчен пĕри. Парти райкомĕпе райисполком çак колхоз ĕçĕпе пĕрмаях интересленмелле, уншăн пĕрмаях тăрăшмалла пулнă пек туйăнать. Анчах чăннипе пачах урăхла пулса тухнă. Колхоза çĕрĕн кашни гектарĕпе тухăçлăн усă курма, мĕн ÿссе çитĕннине йăлтах пухса илме пулăшас вырăнне, районри организацисем тĕрĕс мар çулпа кайнă. Çак колхозăн 45,4 гектар çаран утине вĕсем районри учрежденисемпе уйрăм çынсене çулма ирĕк панă. Паллах, çакăн пек «пулăшнипе» колхоз малтисен ретне тухма пултараймасть.

Юлса пыракан колхозсем районра пĕрре кăна мар пулнă пирки ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем, çав артельсен председателĕсене уйрăмăн пухса, канашлусем ирттерме тата вĕсен ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртма пултарнă пулĕччĕ. Районри организацисен работникĕсем, юлса пыракан колхозсенче час-часах пулса, вĕсене колхоз пурнăçĕ кăларса тăратакан çивĕч ыйтусене татса пама пулăшма пултарнă пулĕччĕ. Çакна вара республикăри нумай районсенче халлĕхе туса пымаççĕ-ха. Парти райкомĕ е райисполком мĕнле те пулин канашлу пухать пулсан, вăл унта пур колхозсен председателĕсене те чĕнет, унта вăл пуринпе те пĕр пек калаçать, юлса пынипе малта пынине пăхса тăмасть. Райкомăн е райисполкомăн работникĕ колхоза каять пулсан, вăл чи малтан лайăх колхоза кĕрет, унăн юлса пыракан колхозра ытларах пулмаллине, унта 2—3 кун пулса, колхозниксемпе калаçса, çитменлĕхсене палăртса, вĕсене вырăнтах пĕтерме пулăшмаллине асра тытмасть. Колхоза килсе председателе ятласа, «пĕçертсе» хăваракан, вара 2—3 сехетренех урăх колхозсем тăрăх чупса çÿреме тухса каякан работник пысăк пулăшу пама пултараймасть. Шел пулин те, çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн халĕ сахал мар-ха. Эпир пĕлнĕ тăрăх, Йĕпреç тата Первомайски районсенчи хăшпĕр руководительсем, колхоз председателĕсене ĕçлĕн пулăшас вырăнне, вĕсене «хытă асăрхаттарма» кăна юратаççĕ. Апла нас пулать: çакăн пек ĕçлени вăл работник çирĕп ыйтнине те, вăл культурăллă пулнипе те пĕлтермест, çавăн пек туни ĕçе сиен кăна кÿрет тата руководителĕн авторитетне чакарать.

Районри организацисен, пуринчен малтан, колхоз председателĕсене пĕлсе суйласа лартма тăрăшмалла, вĕсене час-часах улăштарма памалла мар. Вĕсен колхоз руководителĕсене Устава вĕренсе пĕлме пулăшмалла, вĕсене колхоз пурнăçĕнчи конкретлă примерсем тăрăх вĕрентсе, политикăллă воспитани памалла.

Сталин юлташ 1933 çулхи январь уйăхĕнчех ĕнтĕ çапла каланă:

«Колхоз вăл—шултăра хуçалăх. Шултăра хуçалăха плансăр тытса пыма çук. Çĕрĕçĕнче шултăра хуçалăха, çĕршер, хăш чухне тата пиншер кил те, пĕрлештерсе тăракан хуçалăха планлă руководство йĕркипе çеç тытса пыма пулать. Унсăрăн вăл арканса кайма пултарать... Çакăн пек хуçалăха тытса пыма колхозра хуçалăха планласа, организацилесе ертсе пыма пултаракан хут пĕлекен çынсем кирлĕ таран пулмалла» («Ленинизм ыйтăвĕсем», 388 стр.).

Çакă вара акă мĕне пĕлтерет: парти райкомĕсемпе райисполкомсен колхоз руководителĕсем мĕнле ĕçленине сăнаса тата контроллесе тăмалла кăна мар, вĕсене политика тата производство ыйтăвĕсемпе вĕрентес ĕçе те организацилемелле, ялхуçалăхĕнчи малта пыракан çынсен лайăх опытне пĕтĕçтерсе, унпа юлса пыракансене паллаштармалла, колхоз председателĕсен ĕçĕнчи пуçарулăха аталантарса пымалла, çапла вара вĕсене пултарулла руководительсем, ялти малта пыракан тата авторитетлă çынсем пулма пулăшмалла.

В. ЯКОВЛЕВ.

## В. М. Молотов Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарьне Бирнса йышăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 16-мĕшĕнче каçхине В. М. Молотов Лондонри Совет посольствинче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарьне Бирнса йышăннă.

## Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн секретариачĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен сентябрĕн 17-мĕшĕнче икĕ лару пулса иртнĕ. Ларусем çинчен çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

«Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ Италипе Югослави чикки çинчен Югославин, Англи доминионĕсен тата Итали правительствин шухăшне итлеме хатĕр пулнă.

Çакна май ларура хăйсен правительствисен ячĕпе çаксем пулмалла пулнă: Австралин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Эватт доктор, Çĕнĕ Зеландири Верховнăй комиссарăн ĕçĕсене туса тăракан Кэмпбелл доктор тата Кăнтăр Африка союзĕнчи верховнăй комиссар Хитон Никольс. Анчах та лару председателĕ Югослави делегацийĕнчен çыру илни çинчен пĕлтернĕ. Çырура Югослави делегацийĕ Лондона халь çеç çитни çинчен тата делегаци пуçлăхĕ Югослави вице-премьерĕ Кардель доктор сывă мар пулни çинчен пĕлтернĕ. Çакна пула вара Совет Италипе Югослави чикки çинчен çав представительсем калассине ыран ирхине итлеме йышăннă. Вара ларура Италипе тумалли килĕшÿ договорĕн проектне хатĕрлес тĕлĕшпе заместительсене паракан директивăна сÿтсе-явнă. Заместительсем Италипе тумалли килĕшÿ договорĕн проектне ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн иккĕмĕш сессире тăратмалла.

## Сун Цзы-вень Англие пыни

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 16-мĕшĕнче кĕске вăхăтлăха Англие Китай премьер-министрĕ Сун Цзы-вень доктор пынă. Сун Цзы-вене ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе доктор тата Китайăн Лондонри посолĕ Веллингтон Ку доктор хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Каярахпа Сун Цзы-вень, Ван Ши-цзе тата Ку Англи премьер-министрĕ Эттли патĕнче унăн çуллахи официальнăй резиденцийĕнче Чекерсра ирхи апатра пулнă. Апатланура çавăн пекех тата Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин пулнă.

## Тегеранри хаçатсен редакторĕсем ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне янă телеграмма

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри хаçат-журналсен пĕрлешнĕ совечĕ Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Лондонри советне телеграмма янă. Вĕсем унта çапла каланă: Тегеранри хаçатсен çак телеграммăна алă пуснă редакторĕсем политикăллă тĕрлĕ ушкăнсен представителĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем пирĕн çĕршыври лару-тăру çинчен Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне пĕлтерме кирлĕ тесе шутлаççĕ.

Иранра диктаторла власть представителĕсем пуç пулса тăраççĕ, вĕсем пирĕн çĕршыва 20 çул хушши çаратса пурăннă тата нимĕçсемпе итальянецсен фашизмĕпе килĕштерсе ĕçленĕ, тенĕ телеграммăра. «Паян вĕсем, Пĕрлешнĕ Нацисен уставĕн принципĕсене сирсе ярса, штыкпа усă курса, Иран халăхĕнчен сăмахпа пичет ирĕклĕхне тытса илчĕç. Вĕсем хаçатсене хупаççĕ, хаçатсен редакторĕсене арестлеççĕ». Халăха пусмăрласа тунă çав йĕркене сыхласа хăвармашкăн вĕсем ирĕклĕхпе демократие пĕтерсе лартма хăтланаççĕ. «Çакăн пек йĕркене хирĕç эпир общественность ячĕпе хытă протестлетпĕр,—теççĕ телеграммăна алă пуснă çынсем.—Эпир официальнăй йĕркепе çапла пĕлтеретпĕр: пире сăмах, пуху ирĕклĕхĕсĕр тата харпăрхăйĕн хăрушсăрлăхĕсĕр тăратса хăварчĕç. Çак татăклă кунсенче эпир сире хамăр çĕршыври лару-тăрупа паллаштарма кирлĕ тесе шутлатпăр; пирĕн çĕршывра демократипе ирĕклĕхсен йĕрĕ те çук; эпир тата сире çавăн пек йĕрке тунă пирки пĕтĕм халăх тарăхни çинчен каласа паратпăр».

Телеграммăна çак çынсем алă пуснă: Халили («Егдам»), Амиди Мури («Дад»), Тафаззоли («Иране Ма»), Теймурташ («Растехизе Иран»), Кешаварз («Разм»), Ирадж Искандери («Рахбар»), Фаттохи («Демавенд») тата ыттисем те, мĕн пурĕ 26 çын.

## Югославире Тито маршала «Çĕнтерÿ» орденпа наградăланăшăн савăнни

БЕЛГРАД, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио çапла пĕлтерет: Тито маршала «Çĕнтерÿ» орденпа наградăланине пĕтĕм Югославире чаплăн уявласа ирттереççĕ. Хуласемпе ялсенче йышлă çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

Риека хулинче Тито маршала наградăланă май пухăннă чаплă лару ăна саламлă телеграмма янă.

## Австрин тыткăнри салтакĕсем хăйсен тăван çĕршывне таврăнни

ВЕНА, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Вена хулин хĕвелтухăç енчи вокзалне пĕр эшелон пынă. Вăл Австрин Совет Союзĕнче тыткăнра пулнă 1.600 салтакне илсе пынă. Çав салтаксене Совет правительстви йышăннипе лагерьсенчен кăларнă. Çак çынсем Австрин тыткăнри салтакĕсен пĕрремĕш ушкăнĕ пулаççĕ. Вĕсем пурте лагерьсенчен час ирĕке кăларнăшăн савăннă. Киле çавăн пек хăвăрт ярассине эпир кĕтменччĕ, теççĕ вĕсем. Документчĕсене пăхса тухнă хыççăн Венăра пурăнаканнисене килĕсене янă.

Çывăх вăхăтрах Совет Союзĕнчи тыткăнри австриецсене тата темиçе поездпа илсе килессе кĕтеççĕ.

## Швейцари влаçĕсем совет гражданĕсене юрăхсăр тыткалани

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат корреспонденчĕ Берн хулинчен пĕлтернĕ тăрăх тата Оверсис ньюс агентствин Женевăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕн Швейцарири миссийĕ, Англипе Америка атташисем пулăшнипе, çакна палăртнă: Швейцари лагерĕсенче вырăс гражданĕсене юрăхсăр тыткалани çинчен вырăссем калани тĕрĕс пулнă. Швейцари влаçĕсем «çав усал ĕçсем чăнах та пулнă», тесе йышăннă.

## Чехословакире ĕç повинноçĕ туса хунă

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Чехословаки премьер-министрĕ Фирлингер Чехословакире ĕç повинноçĕ туни çинчен пĕлтернĕ. Ĕç повинноçĕ йĕркипе 16 çултан пуçласа 55 çула çитнĕ арçынсен тата 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ хĕрарăмсен ĕçлемелле пулать, вăл йĕркепе Чехословаки гражданĕсем пулса тăракан нимĕçсемпе венгерсен те ĕçлемелле пулать. Фирлингер çапла каланă: рабочи питĕ нумай çитмен вăхăтра ĕçрен пăрăнса çÿрени преступлени пулать, тенĕ.

## Таннера пĕтĕм тĕнчери коопераци союзĕн президентне вырăнĕнчен кăларнă

ХЕЛЬСИНКИ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Суомен. сосиалидемокраатти» хаçат çапла пĕлтерет: пĕтĕм тĕнчери кооперация союзĕ Таннера çав союзăн президентне вырăнĕнчен кăларнă.

## Португали влаçĕсем гитлеровецсене пулăшаççĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Лиссабонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Португалире пурăнакан нимĕçсем вайлăрах ĕçлеме пуçланă. Вăрçăн юлашки кунĕсенче Португали влаçĕсем нимĕç фирмисене нумайĕшне хупнă, анчах, пăртак вăхăт иртсен, ĕçлеме ирĕк панă фирмăсен списокне пичетлесе кăларнă. Тата пăртак вăхăт иртсен, унтан пысăкрах список пичетлесе кăларнă. Нимĕç фирмисем нумайĕшĕ халăхи вăхăтра пĕтĕм вăйпа ĕçлесе тăраççĕ.

Нимĕçсен пароход фирмисене хупман. Халĕ нимĕçсем пароход тата сывлăш çулĕсене кăтартакан вывескăсене илсе пăрахнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем «Португали турист агенчĕсем» пулса ĕçлеççĕ. Германи шкулĕсене Португали влаçĕсем хупнă пулнă, анчах ун хыççăн нимĕç учителĕсем уйрăм çынсен çурчĕсенче вĕрентме пуçланă. Германин Португалири юлашки посланникĕ фон Галем Каскайжăра пурăнать. Германин хаçат-журнал бюровĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ Клейн та ирĕкре çÿрет. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, Португалире нимĕçсем ирĕклĕн, нуша курмасăр пурăнаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Германи ыттăнĕ Португалие йышлăн пырса тăнă.

## Бухенвальдри лагерĕн главнăй врачне тытса хупнă

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Швеционри радио Люксембургри радио пĕлтернине парать. Вăл пĕлтерÿре çапла каланă: нумай вăхăт хушши шыранă хыççăн союзниксен влаçĕсем Бухенвальдри лагерĕн главнăй врачне Элленбогена Гессен хулинче ярса тытнă. Ăна çынсем çинче «опытсем» тунăшăн, «опытсем» туса темиçе пин çынна вĕлернĕшĕн айăплаççĕ.

## Форд нацистсене пулăшни çинчен „П. М.“ хаçат мĕн çырать

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «П. М.» хаçат корреспонденчĕ Бернштейн Германире 6 уйăх хушши пурăннă чухне илнĕ тĕрĕс материалсем тăрăх çапла çырать: Америкăри Форд компанийĕ нацистсем валли çар материалĕсем туса тăнă тата ытти майсемпе те Германие вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă умĕн те хĕспăшалланма пулăшса тăнă.

Эдзель Форд тата унăн компанийĕн ытти представителĕсем «Фордверке компани» директорĕсен шутĕнче тăнине кăтартса (çав компани акцийĕсен 52 проценчĕ Форд компанийĕ аллинче тăнă), Бернштейн çапла çырать: çакна пула Америкăри Форд компанийĕ 1937-мĕш, 1938-мĕш тата 1939-мĕш çулсенче Германие стратегиллĕ çар материалĕсем — каучук, тĕслĕ металсем т. ыт. те парса тăма пултарнă.

Бернштейн çапла пĕлтерет: Пирл-Харбора Япони тапăнас умĕн Эдзель Форд «Фордверке компанин» Гитлер правительствипе тунă договорĕсене ырланă. Çав договорсем тăрăх, 1942 çулта Германи çарĕ 100 пин грузовик ытла илнĕ. «Фордверке компани» Германин çар влаçĕсем уйăрса панă заводсенче Германи çарĕ валли хăйне уйрăм çар автомашинисем тума килĕшнине кăтартакан договора та Эдзель Форд ырланă. 1939 çулхи апрель уйăхĕнче Америкăри Форд компанийĕн представителĕсем «Фордверке компани» Гитлера 50 пин маркăлăх парне панине те ырланă, вĕсем «Фордверке цейтунг» ятлă хаçата кăларса тăма укçа-тенкĕ парса тăнă, çав хаçат Гитлера тата нацистсен режимне пĕр чарăнмасăр мухтаса тăнă. Вĕсем ырланă пĕтĕмĕшле политикăна пурнăçласа пырса, Форд компанийĕн пĕтĕм тĕнчери коммерци службисем Германирен ют çĕршывсене тавар ытларах ăсатма май панă, çакна пула вара Германи ют çĕршывсен укçине илсе тăнă.

Бернштейн «Фордверке компанин» председателĕ Генрих Альберт янă çырăва илсе кăтартать. Çав çырăва Альберт вăрçă вăхăтĕнче çырнă, вăл унта «Фордверке компанин» акционерĕсем хушшинче американецсем ĕлĕкхи пекех ытларах пулччăр, тесе çырать, мĕншĕн тесен çапла туни Германи экономикине пулăшса тăнă. Вăрçă пуçлансан, «Фордверке компани» хĕспăшалсем тума çар аллине куçнă. Американецсем «Фордверке компанин» акционерĕсем хушшинче ытларах пулсан, Фордăн Европăри компанийĕсене Германие пăхăнтарма май пулать, çапла вара çак тĕлĕшпе те анлăрах политикăна пурнăçа кĕртме май пулать. Альберт «Фордверке компанире» Америка капиталĕ ыттисенчен ĕлĕкхи пекех вайлăрах пултăр тесе тăрăшнă, мĕншĕн тесен çапла туни Америкăн производствăри çĕнĕ меслечĕсем çинчен калакан материалсене ирĕклĕнех илме пулăшнă.

## Сигемицу вырăнтан тухнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Токиоран çакăн пек пĕлтернине парать: Японин халăхи ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сигемицу вырăнтан тухнă.

## Кĕскен

* Вена самоуправленийĕн органĕсем ĕлĕкрех фашистсен аллинче пулнă 103 кинотеатра хула управленийĕн аллине пама йышăннă. Çав кинотеатрсене ĕçлеттерме хăйне уйрăм общество тăваççĕ.

* Ливан парламенчĕ Пĕрлешнĕ Нацисен уставне, Сан-Франциско хулинче пулса иртнĕ конференцире йышăннăскерне, пуртте пĕр кăмăллă пулса çирĕплетнĕ. (ТАСС).

*Пичетленсе тухнă материалсем тăрăх*

## „Иван Петрович Томилкин хÿтĕшки“

Пирĕн хаçатăн 69-мĕш номерĕнче çакăн пек ятлă пĕчĕк фельетон пичетленсе тухнăччĕ. Çак фельетонра СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн «Сельэлектро» управленийĕн Чăваш республикинчи конторин управляющийĕ пулнă Андреев, хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса, Красноармейски, Калинино тата ытти районсенчи колхозсенчен тырпул, ашкакай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем те законсăр илни çинчен, колхозлă яла электрофикацилес тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлени çинчен çырнăччĕ.

Чăваш АССР Прокуратури пĕлтернĕ тăрăх, фельетонра çырнисем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. Андреева «Сельэлектро» Чăваш конторин управляющинчен кăларса, уголовнăй йĕркепе айăпласа ответ тыттарма суда панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

1945 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕпе октябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче Шупашкарта çамрăксене ФЗО шкулĕсене илеççĕ.

ФЗО шкулĕсене 16—17 çула çитнĕ арçын ачасене тата 16—18 çула çитнĕ хĕрачасене илеççĕ.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илме Шупашкар Горисполкомĕнче Призыв комиссийĕ тунă ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе илекен çамрăксемсĕр пуçне, вĕсене тата кашни хăйĕн ирĕкĕпе кĕме пултарать. Çапла вĕренме кĕрес текенсен Горисполкомри Призыв комиссине заявлени памалла (Горисполком, 3-мĕш пÿлĕм, Призыв комиссийĕ).

## 1-мĕш Петр киммине Ленинграда илсе пынă

ЛЕНИНГРАД, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Центральнăй тинĕс-çар музейĕн питĕ хаклă экспонатне — 1-мĕш Петрăн паруслă чаплă киммине (ботикне) Ульяновскран Ленинграда каялла илсе пынă. 1-мĕш Петр флот ĕçне çав кимĕ çинче Мускав патĕнчи Переяславль кÿлĕ çинче тата Яуза шывĕ çинче вĕренме пуçланă.

200 çул ытла каялла çав кимме Петр хушнипе Петербург хулине илсе пынă. 1723 çулхи августăн 11-мĕшĕнче çав кимĕ—вырăссен тинĕс флочĕн пуçламĕш кимми—Кронштадта флот праçникне пынă, вăл унта йĕркипе тăрса тухнă карапсем умĕпе чаплăн иртсе пынă. Çавăнтан вара вăл тинĕс флочĕн уявĕсенче час-часах пулнă.

Центральнăй тинĕс-çар музейĕн залĕсенче хисеплĕ вырăн йышăнса тăнă çав кимме Отечественнăй вăрçă пуçлансан тыла илсе кайнă. Халĕ ăна музейре çĕнĕрен кăтартма пуçлаççĕ.

## *Крахмал заводĕ ĕçлеме тытăннă*

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Крахмал заводĕ крахмал тумалли сезона лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Çĕрулми хумалли хранилищĕсем, вута, улăм тата ыттисене те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Сентябрĕн 23-мĕшĕнче крахмал заводĕ çĕрулми йышăнма тытăнса, сентябрĕн 15-мĕшĕнче ĕçлеме пуçланă.

Районри нумай колхозсем крахмал заводне çĕрулми леççĕ. Н. АЛЕКСЕЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00260 Типография № [illegible] управления [illegible] полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. [illegible] 42 п. л. Тираж [illegible].000 экз.